Михаил Юхма

**«Чун суранлă тесе, ан хурлан-ха, тăван …»**

Чун суранлă тесе, ан хурлан-ха, тăван,
Пулăшма та май çук, мĕн тăвам?

Пурнан пурнăç çӳпçи хĕн-асапсăр пулмасть,
Ыр сăмахăн хакне нимле ылтăн тăмасть.

Хĕн-асап ман ума та килет тек-текех,
Пурпĕрех хурланмастăп ытла сан пекех.

Пурăнап ĕмĕтпе, килес кун çутипе
Çыркалатăп хĕнпе, хĕнпе те хĕмпе.

Шанчăк пур, ĕмĕт пур, тăван, кур,
Хĕн-хура таптаса урусен айне хур.

Чĕрӳпе çирĕплен, чунупа та хĕмлен,
Çунат хуш та çĕклен, эс телейшĕн ĕçлен.

Хăвăн пек çынсемпе, çунакан чунсемпе
Пĕр çул туп, ут ялан вĕсемпе.

Телее хутăрла, ĕçӳнте ялан çун,
Сурана сыватать ĕçре канăçнă чун.

Ман сăмахăм сахал, çак сăмах – ман халал,
Ĕçлеме пуçлама туп, тăванăм, вăй-хал.

*Юхма, М. «*Чун суранлă тесе, ан хурлан-ха, тăван *...» : сăвă / М. Юхма // Тăван Атăл. – 1970. – № 1. – С. 36.*